# Ответ первого заместителя министра природных ресурсов и экологии ЧР Е. Ющина на вопрос жителей с. Красноармейское



В редакцию нашей газеты поступил вопрос от жителей с. Красноармейское. Они пишут, **что единственный большой пруд в селе был и для жителей райцентра, и для гостей большим удовольствием. Здесь они купались, рыбачили, проводили все свободное время. Из-за оползневых процессов вода из пруда была выпущена. Село Красноармейское осталось без большого пруда. Какова сейчас ситуация?**

За разъяснением мы обратились в Минприроды Чувашии.

Как нам ответил первый заместитель министра Е. Юшин, земляная плотина в с. Красноармейское возведена хозяйственным способом, без наличия каких-либо водоспускных и водовыпускных сооружений, а также механизмов, регулирующих уровень воды в пруде. Эксплуатируется она уже свыше 40 лет.

24 мая прошлого года в теле земляной плотины в с. Красноармейское по всей длине начали развиваться активные оползневые процессы. При получении информации о данном происшествии сотрудники Минприроды Чувашии и ГКЧС Чувашии незамедлительно выехали в с. Красноармейское. В результате понижения уровня воды в пруду удалось снизить давление на тело земляной плотины и прекратить дальнейшее развитие оползня.

По результатам комиссионного обследования с участием представителей ГК ЧС Чувашии, администрации района и поселения, специалиста-гидротехника было установлено, что вода в пруду спущена на 2,5-3 метра через катастрофический канал и путем выкачивания воды через насос; по телу и основанию земляной плотины произошел цирковой активный оползень по всей длине из-за отсутствия соответствующих дренажей и строительства земляной насыпи без какой-либо проектной документации и, соответственно, без гидрологических расчетов.

Администрации Красноармейского района рекомендовано разработать проектную документацию для проведения восстановительных работ. В настоящее время проведены изыскательские работы. После разработки проектной документации планируется восстановить данную плотину.

# Пĕрлехи анлă ларура сӳтсе яврĕç

**Нарăс уйăхĕн 12-мĕшĕнче Шупашкарта "Трак ен" ентешлĕхпе район тата район администрацийĕн ертӳçисен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен пĕрлехи анлă ларăвĕ иртнĕ. Унта района йĕркеленĕренпе — 80, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа — 70, "Трак ен" ентешлĕх туса хунăранпа 25 çул çитнине хатĕрленсе ирттерес тата ытти пĕрлехи ыйтусене сӳтсе явнă. Ларăва çавăн пекех Трак енри журналистсем, творчество çыннисен пĕр ушкăнĕ хутшăннă.**



Ларăва хутшăннисем.

Сăнӳкерчĕкĕ Ю. Борисовăн.

Г. БОРЗИН.

Ларура виçĕ ыйту пăхса тухнă. "Трак ен" ентешлĕхпе Красноармейски район администрацийĕн 2015 çулта пурнăçламалли пĕрлехи ĕçсем" ыйтупа "Трак ен" ентешлĕх ертӳçи А. Львов доклад, ЧР муниципаллă пĕрлешӳсен канашĕн ĕç тăвакан директорĕ, ЧНКан Мăн Канашĕн членĕ С. Николаев çумдоклад туса панă, "Районта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 70, хамăр района йĕркеленĕренпе 80 çул çитнине уявласси" — район администрацийĕн пуçлăхĕ А. Шестаков, "Район администрацийĕн энциклопедине хатĕрлес ĕç епле пыни" ыйтупа энциклопедине хатĕрлес тĕлĕшпе туса хунă редколлеги ертӳçи В. Михайлов тухса калаçнă. Ыйтусене сӳтсе явма ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, "Чăваш бройлерĕ" ОАО ертӳçи В. Николаев, Чăваш халăх поэчĕ Ю. Сементер, Упи ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю. Степанов, И. Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУн ректорĕ, республикăн халăха вĕрентес ĕç министрĕ, ЧАССР Министрсен Совечĕн председателĕн çумĕ пулнă Г. Сидоров, ЧППУн хальхи проректорĕ Д. Иванов (Хĕлеç), "Трак ен" ентешлĕхĕн хастарĕ, "Механизатор" хаçатăн редакторĕ А. Яковлев (Çĕньял Упи), ыттисем хутшăннă.

Лару сӳтсе явнă ыйтусемпе йышăнусем тунă.

# Пысăк ĕç туса иртертĕмĕр

**Оборонăпа массăллă тата спорт ĕçĕсен уйăхлăхĕ вĕçленчĕ. Çак тапхăрта Упири пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта та чылай мероприяти йĕркелесе иртертĕмĕр.**

В. ВАСИЛЬЕВА, вĕрентекен

Кăрлач уйăхĕн вĕçĕнче кĕçĕн классен вĕренекенĕсем хушшинче йĕлтĕр спортне кăмăллакансен ăмăртăвне иртертĕмĕр. Арçын ачасем хушшинче малти вырăнсене К. Марков (4 кл.), Д. Николаев (3 кл.), Л. Платонов (4 кл.) тухрĕç, хĕрачасенчен А. Иванова (3 кл.), А. Никитина (4 кл.), Е. Васильева (4 кл.) палăрчĕç.

5—8-мĕш классем хушшинче çивĕч тупăшу пычĕ. 5 — 6-мĕш классем хушшинче малти вырăнсене çаксем пайларĕç: С. Якимова, Л. Петрова, В. Николаева. Пурте 6-мĕш класра вĕренеççĕ.

7— 8-мĕш классем хушшинче саккăрмĕшсем палăрчĕç: Л. Николаева, Т. Василькова, А. Осипова, К. Владимиров, Арт. Козлов, Ал. Козлов.

* * *

Пăшалтан тĕл перекенсен ăмăртăвне те ачасем чăтăмсăррăн кĕтрĕç. Унта 28 ача хутшăнчĕ. 9-мĕш класра вĕренекен А. Никифоров (15 очко), Л. Соловьева (13) мала тухрĕç. Асăннă ăмăртăва И. Матвеев вĕрентекен йĕркелесе пычĕ.

Çавăн пекех çамрăк армеецсем ( унта 5 — 10-мĕш классем хутшăнчĕç) "Зарница" вăйăра вăй виçрĕç. Каччăсемпе хĕрсем стройпа утассипе, Калашников автоматне салатса пухассипе, тĕрлĕ чăрмавсем витĕр тухассипе тупăшрĕç. Кашни отделенинчи 12-шер ача класс чысне хӳтĕлерĕ. Вăталăх классенчен çиччĕмĕшсем (класс ертӳçи — Л. В. Фролова), аслисем хушшинче тăххăрмĕшсем (класс ертӳçи — И. Б. Миронова) палăрчĕç.

Сĕтелçи теннис вăййин ăмăртăвĕсем те çӳллĕ шайра иртрĕç. А. Васильева, Д. Якимов (11 кл.), А. Никифорова (8 кл.), А. Илларионов, О. Илларионова (7 кл.), Э. Антонов (10 кл.) вăйăсенче мала тухрĕç. Ăмăртусене Д. Архипов (10 кл.) йĕркелесе пычĕ.

Асăннă уйăхлăх хушшинче кашни класрах Ленинград блокадине сирме хутшăннисене тата пирĕн çарсене Афганистан Республикинчен илсе тухни 26 çул çитнине халалласа паттăрлăх урокĕсем иртрĕç. Эпир шкула ĕçпе вăрçă ветеранне, 94 çула пуснă Янмурçинта пурăнакан Н. Петрова хăнана чĕнтĕмĕр. Никита Петрович вăрçă вăхăтĕнче Тинĕс Çар флотĕнче службăра тăнă. Вăл каласа панине ачасем питех те тимлĕ итлерĕç.

Уйăхлăх вăхăтĕнче пирĕн волонтерсем ял тăрăхĕнче вырнаçнă палăксем патне хывнă çулсене тасатсах тăчĕç.

Кун ыйтăвĕ

# Ялта хуçа кирлех, терĕç

**Пайсупин ялĕнче староста ыйтăвĕ çивĕч тăчĕ.**

Г. ЕФИМОВ

Чăнахах та, хуçа кирлех... Ĕлĕкрех мĕн пур ĕç-пуçа бригадир йĕркелесе пынă: ĕçе явăçтарнă, ялта тирпейилем ыйтăвне вăл çине тăнипе, паллах, пĕрле пухăнса, канашласа, пĕр шухăшлă кăмăлпа пурнăçланă.

Халĕ те пирĕн çак шухăшкăмăлпах пурăнмалла, ĕçлемелле. Çакнашкал ĕмĕттĕллевпе иртрĕ те нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕнче ялти активистсен черетлĕ пухăвĕ.

Асăннă ыйтупа чăн малтанах Упи ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю. Степанов сăмах илчĕ. Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 70 çул тултарнине чыслăн хатĕрленсе кĕтсе илессипе паян-ыран пĕр тăхтамасăр умра тăракан задачăсем çинче чарăнчĕ. Ял варринче нимĕççене хирĕç çапăçнă ентешсене сума суса лартнă палăка сăн-сăпат кĕртесси тавра пычĕ калаçу.

— Унпа çума-çумăнах вырнаçнă шкул сад-пахчине юхăнма парас марччĕ, çавăнта Çĕнтерӳ паркĕ тăвасчĕ, — çирĕп йышăну турĕç активистсем.

Тата яла пырса кĕнĕ çĕрте, ĕлĕкхи шыв башни таврашĕнче, "Аслă Çĕнтерĕве — 70 çул" парк уçма,çавăнта çуркунне йывăççем лартма тĕв турĕç.

Стадион таврашĕнчи йĕркелĕх пирки те калаçу сыпăнчĕ. Çакăнта та кăçал, район 80 çул тултарнă май, стадионтан асфальтлă çула Петр Яковлев ячĕллĕ аллейăпа сыпăнтарма, çавăнта йывăççем лартма палăртрĕç. Петр Николаевич — çĕршывăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен ветеранĕ, 28 çул çар хĕсметĕнче тăнă. Пайсупинта ял старости пулса ĕçленĕ чухне газ кĕртес çĕре иксĕлми тӳпе хывнă вăл.

Активистсен пухăвĕнче Г. Яковлев, А. Прокопьев, В. Белов, В. Степанов, В. Матвеев, Т. Терентьева, В. Сергеев, Л. Архипов тухса калаçрĕç.

Палăк çумне иртнĕ вăрçăран таврăннисен тата вăрçă хирĕнче выртса юлнисен ят-хушамачĕсене Асăну хăмине вырнаçтарма, тирпей-илем ĕçĕсене пурнăçлама килĕрен 500-шер тенкĕ пухма сасăларĕç.

Пухăннисем пĕр шухăшкăмăлпа ял старости пулма Анатолий Сильвестрович Терентьева тата ăна пулăшма урам комитечĕн ертӳçисене (В. Тимофеев, Г. Ефимов, П. Прокопьев, Л. Архипов, Г. Яковлев, А. Скворцов) суйласа хăварчĕç.

# Тумхахлă кун-çул каçалăкĕнче

**(З. Т. Борисов майор пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа 40 кун çитнĕ май)**

2015 çулхи кăрлач уйăхĕн вĕçĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ, кун-çулĕн пысăк пайне шалти ĕçсен тытăмĕнче ĕçлесе иртternĕ, 91 çула пуснă, Упи ялĕнче пурăннă Зиновий Тимофеевич Борисов пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Çак кунсенче шăпах хĕрĕх кун çитет.

Упи ялĕнчи Тимофей Борисовичпа Матрена Ивановна Борисовсем сакăр ача çитĕнтернĕ. Çав йышлă ачасем хушшинче З. Т. Борисов пулнă. Упи шкулĕнче вĕреннĕ. Вăхăт çитсен Чăваш Енрен катара, Амур юханшывĕ хĕрринчи хулара З. Борисов салтак шинелĕ тăхăннă. Çар служби шалти ĕçсен çарĕнче (ун чухне НКВД) иртнĕ. Çичĕ çул салтак пăтти çинĕ ентешĕм. 1949 çулта çирĕм пиллĕкри З. Борисов яла таврăннă. Кĕçех ăна Шупашкара, патшалăх хăрушсăрлăх комитетне ĕçлеме чĕнсе илнĕ. Çичĕ çул ĕçленĕ кунта. Каярах Шалти ĕçсен министерствин Мускаври аслă шкулне вĕренсе пĕтерсе диплом илнĕ. 1961 çулта милици тумне тăхăннă З. Борисов. Çĕмĕрле, Елчĕк, Муркаш районĕсенчи шалти ĕçсен пайĕсен пуçлăхĕнче тимлет вăл — пĕтĕмпе вунçичĕ çул. Вăтăр çул ытла милици органĕсенче ĕçленĕ З. Борисов майор, Упи тăрăхĕнчен тухнă чи малтанхи юрист, шалти ĕçсен пайĕн начальникĕ пулнă вăл. Каярах ывăлĕ те ашшĕн çул-йĕрне суйласа илчĕ. Т. Борисов подполковник çирĕм пилĕк çула яхăн ЧР айăплавсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслекен Федераллă службăра (УФСИН России по ЧР) ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнăччĕ. Анчах унăн та кун-çулĕ кĕске килчĕ, йывăр чире пула 51 çула кайса çĕре кĕчĕ Тимофей Зиновьевич. Хулара хăтлă хваттер пулнă пулин те, тăван енех килĕштернĕ Зиновий Тимофеевич, хăй çуралса ӳснĕ вырăнта капмар çурт-йĕр çĕкленĕ. Мăшăрĕпе, тивĕçлĕ канăва кайиччен ЧР Ялхуçалăх министерствин тĕп специалистĕнче вăй хунă Людмила Федоровнапа ватлăх кунĕсене Упинче иртерме тĕв тунăччĕ вĕсем. Шел, хаяр вилĕм çави Л. Борисована та пирĕнтен вăхăтсăр уйăрса кайрĕ. Çапла вара пĕр килти тăвата виле Упи масарĕ çинче канлĕх тупнă (кунтах çамрăкла вилнĕ Таня хĕрне те пытарнă).

Пурнăç пурăнса иртерессси уй урлă каçасси пулман З. Борисовшăн. Ун тилхепине çирĕп тытса пынипе кăна вăл çав кунсен пархатарне курнă.

Зиновий Тимофеевич, йывăр тăпру çăмăл пултăр, канлĕ çывăр, эсĕ пире ан аса ил, санăн ырă ĕçӳсем вара хăвна аван пĕлнĕ юлташусен чĕрисенче упранĕç.

**Юлташĕсен ушкăнĕ.**